ХЫПАР

1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи çу уйăхĕччен тĕрлĕ ятпа тухнă, «Хыпар» хаçат пуçарăвĕпе 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнчен тепĕр хут тухма пуçланă

# Çамрăксен хаçачĕ

Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ

2016, авăн, 15, кĕçнерникун, 36 /6129/ №

Хакĕ ирĕклĕ

www.hypar.ru
molgazeta@rambler.ru

эрнелĕх телепрограмма 16+



ÇЫРĂНТАРУ – 2017

## «ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

**Сентябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30% йӳнĕрех**

2017 çулăн I çуррринче илсе тăмашкăн ***авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен*** йӳнĕ хакпа: «ХЫПАРА» – 572,88 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 279,36 тенкĕпе, «ÇАМРĂКСЕН ХАÇАТНЕ» – 333,36 тенкĕпе кашни сыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ

# «Нарспири» йĕркесем пĕрмай аса килеççĕ

**ЧР Наци библиотекин маркетингпа инноваци пайĕн социаллă инновацисен секторĕн заведующийĕ Дарья Рябцева ЧР Çамрăксен патшалăх премине литература, культура тата искусство енĕпе «Нарспие вулатпăр» тĕнче шайĕнчи проекта йĕркеленĕшĕн тивĕçнĕ. Пике 18 çултах вулавăш ĕçне кӳлĕннĕ. Кăçалхи нарăс уйăхĕнче унта тăрăшма тытăннăранпа 10 çул çитнĕ. ЧР Пуçлăхĕн стипендине тăвату хут тивĕçнĕ пултарулă хĕре «Çамрăксен хаçачĕн» тĕпелне йыхравларăмăр.**

Дарья тĕп хулара çуралса ӳснĕ. Кунти 51-мĕш шкултан /халĕ вăл 4-мĕш лицей/ вĕренсе тухсан культура училищине ăс пухма кĕнĕ. Пике аслă пĕлĕве Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институтĕнче илнĕ. Библиотекарь профессине унăн амăшĕ килĕштернĕ. Сывăх çыннин ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тĕллевпе вăл ку енĕпе вĕренме шухăш тытнă. Пĕлӳ шайне темиçе уйăх тарăнлатсанах вăл çак профессие чунран юратма пуçланă.

8 ➔

ПУÇ УСМАСĂР

# Ксюша юр айĕнче 5 сехет ларнă

**«Ача-пăча ÿстересси вутра çуннă пек», – тенĕ ваттисем. Вĕсемпе тимлĕхе самантлăха та çухатма юрамасть. Ара, инкек курасси инçех те мар çке-ха. Çĕрпÿ районĕнчи Вĕрмерте пурăнакан Аленăпа Сергей Кузьминсем 1999 çулта çемье чăмăртанă. Çулталăкран çут тĕнчене ывăл килнĕ. Шел те, Толикăн ĕмĕрĕ вăрăм пулман. Вăл ултă çул каялла çут тĕнчерен уйрăлнă. Çухату ашшĕпе амăшĕн чунне халĕ те ыраттарать. Нарăсăн 23-мĕшĕнче, Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунĕнче, вĕсен ывăлĕ ĕмĕрлĕхех куç хупнă. Инкек пулнă куна аса илме çăмăл мар...**



Ун чухне 3-мĕш класа каякан Толикпа унăн 8 çулти йăмăкĕ Ксюша çунашкапа ярăнма тухнă. Вĕсемпе пĕрле тепĕр арçын ача пынă. Урамра асар-писер çил-тăман алхасни те пĕчĕкскерсене килтен тухма чарман. Шăпăрлансем ялтан инçех мар вырнаçнă тарăн çырмана çул тытнă, чи çÿллĕ вырăнтан нимĕн хăрамасăрах ярăннă. Вĕсем хыççăнах пысăк юр купи аннă. Тахăш самантра пĕчĕк ачасем 2 метр хулăнăш юр айне пулнă. 8 çулти Ксения çăлăннă: вăл йывăр юр айĕнчен пуçне кăларма пултарнă. Сашăпа Толя пачах курăнман. Киле вăхăтра таврăнман ачасене ашшĕ-амăшĕ çухатнă. Вĕсенчен пĕрин Шупашкара, киле, каймалла пулнă.

– Ачасене çемйипех шырама тухрăмăр. Хальччен аякка кайса курманскерсене пач çухатрăмăр. Юрать, Ксюша сас пачĕ. Унсăрăн вĕсене хăвăрт тупас çукчĕ. Ксюша юр айĕнче 5 сехет ытла ларнă. Шăнса кÿтнĕскере васкавлă медпулăшу машинипе сыватмăша ăсатрĕç. Тольăпа унăн юлташĕн чĕри эпир çитиччен тапма пăрахнă, – иртнине аса илчĕ çемье пуçĕ.

Çухату мăшăр чунне хытах хуçнă, çапах Ксюша сывă юлни вĕсене малалла пурăнма хавхалантарнă. 2007 çулта çут тĕнчене Андрей килнĕ. Вăл сусăр çуралнă. Тĕпренчĕкĕ чирлине ашшĕпе амăшĕ çитĕннĕçемĕн çеç сăнанă. Андрей ытти пĕчĕк ача пекех выляна, кулнă, 3 çулта ура çине тăнă. Вăйĕ пĕтнĕрен упаланме пуçласан ача сывă марри палăрнă. Вăл калаçайман. Кузьминсем тĕпренчĕкне ача çуртне ярасси пирки нихăçан та шухăшламан, ăна ура çине тăратма тĕллев лартнă. Йывăр диагноза пула Андрея тăватă çул каялла сусăррисен йышне кĕртнĕ. 9 çулти арçын ача «атте, анне» теме çеç пĕлет. Çак икĕ сăмаха калама вăл шăллĕнчен Димăран вĕреннĕ. Андрея больницăна çулталăкне темиçе хут вырттарнă пулин те вăл самайланни курăнман.

– Шупашкарта логопед патне те çÿресе пăхрăмăр. Массаж тунă хыççăн та ача калаçма пуçламарĕ. Малтан чиперех утатчĕ. Халĕ ури çинче нумай тăраймасть, çавăнпа кунĕпех унăн çумĕнче пулма тăрăшатăп. Пылчăклă е сивĕ çанталăкра урама кăлармастăп, – каласа кăтартрĕ кил ăшшин управçи.

Сывă ачасемпе пĕрле шкула çÿрейменскере учительсем килте вĕрентме тивĕç. Ку ыйтăва ял тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхĕ те пĕлет. Çемьене вăл ку тĕлĕшпе пулăшма тăрăшать.

Алена килте ачасемпе ларать. Мăшăрĕ Сергей асфальт çул сарнă çĕрте ĕçленĕ. Анчах унта укçа тÿлеменрен пăрахма тивнĕ. Хальлĕхе вăл ниçта та вăй хумасть. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх усраççĕ: икĕ ĕне, сурăхсем. 6 çул каялла инкекрен çăлăннă Ксюша 9-мĕш класс хыççăн парикмахера вĕренме тĕллев лартнă. Чи кĕçĕнни Дима ача садне çÿрет.

Кузьминсем йывăç çуртра пурăнаççĕ. Амăшĕн капиталĕпе усă курса çĕннине хăпартма ĕмĕтленеççĕ. Шăпа вĕсене сахал мар кÿрентернĕ пулин те пуç усмаççĕ вĕсем, ачисене çитĕнтерсе çĕршыва юрăхлă çын тума тăрăшаççĕ.

**Любовь ПЕТРОВА.**
**Автор сăнÿкерчĕкĕ.**

МАТТУР!

# «Нарспири» йĕркесем пĕрмай аса килеççĕ

**(Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).**

Вĕрентекенсем унăн пултарулăхне, анлă тавракурăмне тÿрех асăрханă. Училищĕре 3-мĕш курсра вĕренекен студенткăна ЧР Наци библиотекине ахальтен мар ĕçе илнĕ.

Библиотекарь пулма тĕллев тытнă пикене нумай кĕнеке вулама тивесси хăратман-ши? Шкулта вĕреннĕ чухнех литература произведенийĕсен тулли варианчĕпе паллашнă вăл, çавăнпа кĕнеке шĕкĕлчесси уншăн – киленĕç. Ку ыйту хĕр умне нихăçан та йывăрлăх кăларса тăратман.

Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреатне проект пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.

– 2014 çулта пирĕн пата Хасавюртри Расул Гамзатов ячĕллĕ библиотекăран йыхрав килчĕ. Вĕсем «Расул Гамзатова вулатпăр» проекта хутшăнма чĕнчĕç. Пире вăл питĕ килĕшрĕ. Çакăн хыççăн Чăваш Енре те тĕнче шайĕнчи проект пуçарас шухăш çуралчĕ. Маркетингпа инноваци пайĕн ĕçченĕсемпе канашларăмăр та ун валли Константин Ивановăн чăваш наци культурипе пурнăçне сăнлакан «Нарспи» поэмăна суйларăмăр. Ун чухне Раççейре – Литература, Чăваш Енре Константин Иванов çулталăкĕ пулнă май пирĕн проект ăнăçлă пурнăçланчĕ. Поэмăна чăвашларан вырăсла Борис Иринин куçарнă вариантпа усă куртăмăр. Проекта республикăра тата унăн тулăшĕнче пурăнакансем çеç мар, тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕпленнисем хутшăнчĕç. Хайлава 100 пая уйăртăмăр. Поэмăн сыпăкĕсене Раççейре çеç мар, Китайра, Францире, АПШра, Швецире, Кувейтра, Перура, Германире, Аслă Британире, Индире, Испанире, Мексикăра, Канадăра, Австралире, Ирландире тата ытти тăрăхра пурăнакансем те вуларĕç. Вĕсем «Нарспие» вырăсла кăна мар, ытти чĕлхепе вулама кăмăл пурри çинчен те пĕлтерчĕç. Çынсен сĕнĕвне шута илсе проект программине улшăнусем кĕртрĕмĕр. Поэмăн пĕрремĕш сыпăкне йĕркесем çине пайларăмăр та ăна тĕрлĕ халăх çыннисене хăйсен тăван чĕлхипе вулама май туса патăмăр. Проекта хутшăнакансен поэма сыпăкне хăйсем пурăнакан чи паллă та илемлĕ вырăнта каламаллаччĕ, ăна видео ÿкерсе пирĕн пата çитермеллеччĕ. Чылайăшĕ шантарчĕ пулин те ĕçе вăхăтра пурнăçлаймарĕ. Пĕтĕмлетÿ тапхăрĕ çывхарсан 10-15 видеовулав çитменни палăрчĕ. Проекта хутшăнакансемпе тепĕр хутчен çыхăнса ĕçе вĕçне çитерме ыйтрăмăр. Чылайăшĕ видеона кĕсье телефонĕпе ÿкернĕ, çавна май хăшĕ-пĕрин пахалăхĕ тивĕçтермерĕ. Николай Яковлев оператор поэмăн пайĕсене сыпăнтарма килĕшрĕ. Унпа пĕрле кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеме тиврĕ. Максим Китаев кĕвĕ суйлама пулăшрĕ. «Нарспие» тĕрлĕ чĕлхепе пăхмасăр калакансен видеовулавне ЧР Наци библиотекин ĕçченĕ Максим Тимофеев пуçтарчĕ, – каласа кăтартрĕ поэмăна пăхмасăр пĕлекен Дарья Рябцева.




Проекта пĕтĕмпе 29 çĕршыври 300 ытла çын хутшăннă. Дарья кăсăклă самантсене аса илчĕ:

– Кашни видеовулавăн – хăйĕн историйĕ. Сире хăш-пĕр самант çинчен каласа кăтартам. Перу Республикинчен вулава Елена Глухова хутшăнчĕ. Вăл видео ÿкермешкĕн питĕ илемлĕ вырăн суйланă. Шел те, ун чухне тĕтреллĕ кун пулнăран вăл питĕ япăх курăннă. Вĕсем проекта çемйипех хутшăнма хатĕрленнĕ. Хĕрĕ текста ан мантăр тесе амăшĕ ăна ун умĕнче тытса тăнă. Упăшки камерăпа ÿкернĕ. Чи кĕçĕн ывăлĕ кÿмере макăрмасăр выртнă. Алена Васильева видеона АПШра хатĕрленĕ. Вăл ăна Ирĕклĕх статуйи умĕнче тунă. Алена поэмăна малтан мана скайп урлă темиçе хут та вуласа кăтартрĕ. Пĕрмай акăлчанла калаçнăран вырăсла таса пуплейменшĕн пăшăрханчĕ. Людмила Венедиктова поэмăна Грецири сăвапплă ту çывăхĕнче вуланă. Туристсем вăл мĕн каланипе кăсăкланнă. Людмила вĕсене чăваш классикĕ Константин Иванов çинчен каласа кăтартнă, унăн поэмипе паллаштарнă. Эппин, «Нарспи» пирки проекта хутшăнакансем çеç мар, туристсем те пĕлнĕ, ăна камера умĕнче вулани чылайăшĕн видеоархивĕнче вырăн тупнă. Манăн шухăшпа, тĕп тĕллев пурнăçланчĕ.

28 çулти Дарья проекта республика шайĕнче пысăк хак парасса шухăшламан. Ăна вăл хăйĕн çеç мар, коллективăн çитĕнĕвĕ пек йышăнать. Халĕ «Нарспи» поэмăри йĕркесем урамра уçăлса çÿренĕ чухне те, килте пĕр-пĕр ĕç тунă вăхăтра та Дарьйăн асне килеççĕ. Вĕсем унăн чĕрине ĕмĕрлĕхех вырнаçнă.

Дарьйăн библиотекăри кулленхи ĕç-хĕлĕ тĕрлĕ акципе конкурс йĕркелессипе çыхăннă. Чи паллисем – «Библиокаç», «Вулакан Чăваш Ен», «Библиочăрăш». Çавăн пекех вăл ача-пăча библиариумĕн ĕç-хĕлне йĕркелес енĕпе тимлет, унта çÿрекен амăшĕсемпе ачисене кĕнеке тĕнчипе çывăхлатма тăрăшать. Пĕтĕм Раççейри «Селигер» вĕренÿ форумĕнче Дарья «Пуласлăх библиотекарĕ» сменăна ертсе пыракансенчен пĕри пулнă. Унăн шухăшĕпе, литература – чун апачĕ, çавăнпа вулав центрĕсенче яланах черет.

– Эпир пурнăçпа тан утма тăрăшатпăр. Библиотекăна килейменнисем патне кирлĕ кĕнекесене электрон майпа çитерме пултаратпăр. Çак çăмăллăхпа усă курас тесен библиотекăн вулаканĕ çеç пулмалла, – пĕлтерчĕ çамрăкскер.

Пушă вăхăтра Дарья сывлăхне çирĕплетет, спортăн тĕрлĕ тĕсĕпе кăсăкланать. Унăн тепĕр чун киленĕçĕ – апат пĕçересси. Плита умĕнче тăрса пачах ывăнмасть вăл. Хăй янтăланă çимĕçпе ыттисене сăйлама юратать.

Дарья çамрăксене çутă пуласлăх сунчĕ, кашнин çитĕнÿсем тума май пуррине пĕлтерчĕ. Тăван тăрăхра ĕçлесе пурăннине нимĕн те çитменнине палăртрĕ вăл. Дарья Рябцева малашне те Чăваш Еншĕн пĕлтерĕшлĕ проектсем шухăшласа кăларма тĕллев лартнă.

**Любовь ПЕТРОВА.**
**Автор сăнÿкерчĕкĕ.**